Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

23 (7448) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Сывă пурнăç йĕркишĕн

## Район пуçлăхĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн





Çуркунне кунран-кун хăйĕн пирки аса илтерет, илемĕпе тыткăнлать. Çакă вара уйрăмах мартăн 17-мĕшĕнче палăрчĕ. Çанталăкĕ йĕлтĕр спортне кăмăллакансем валлиех тейĕн. Шăмат кун Муркашри йĕлтĕр базиЙĕлтĕрçĕсене Социализмла Ĕç Геройĕн Е.А. Андреевăн парнисене тата район пуçлăхĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн йĕлтĕр йĕрĕ çине йыхравларĕ. Ăмăртăва спорт тусĕсем питĕ активлă хутшăнчĕç.

Спорт уявне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ, ăмăртăва хутшăнакансене тав турĕ, йĕлтĕр йĕрĕ çинче ăнăçу сунчĕ. Çавăн пекех старта тухакансене районти тĕп больницăн тĕп врачĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, "Росгосстрах-Чувашия" страхлакан компанин районти ертӳçи В.И. Вязов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин, П.Н. Вязов предприниматель спорт уявĕ ячĕпе саламларĕç, ăнăçусем сунчĕç.

**Сăн ӳкерчĕксенче: район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов йĕлтĕр йĕрĕ çинче; стартра.**

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)

Республикăра

## Çĕнĕ архитектурăпа парк ансамблĕ пулать

Эрне кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Пĕтĕм тĕнчери "Çĕр çуллăх меценачĕсем" ыр кăмăллăх фончĕн представителĕпе, Раççей тава тивĕçлĕ художникĕпе, "Тĕнчен ырă ангелĕ" проектăн тĕп архитекторĕпе Петр Стронскипе тĕл пулнă.

Асăннă фонд ыр кăмăллăх процесĕсене обществăра сарас енĕпе ĕçлет. Республика пуçлăхĕпе курнăçнă май Петр Стронский хăйĕн визичĕн тĕллевĕ çинчен пĕлтернĕ – "Çĕр çуллăх меценачĕсем" фонд наградисене Чăваш Республикинчи вĕрентӳ системин ĕçченĕсене, предпринимательсене парасси. Чыслав савăнăçлă лару-тăрура И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУн культура керменĕнче иртнĕ.

Тĕл пулу вăхăтĕнче фондăн хăш-пĕр программине Чăваш Енре те пурнăçлас ыйтусене сӳтсе явнă. Сăмахран, "Тĕнчен ырă ангелĕ" архитектурăпа парк ансамблĕн строительстви пирки калаçса татăлнă. Кунашкал комплекссем Раççейĕн чылай хулинче пур ĕнтĕ. Вĕсем ĕлĕкхи аслă меценатсене асра тытассин тата хисеплессин символĕ пулса тăраççĕ.

**ЧР ПА пресс-службиĕ.**

Ĕçре маттуррисем



***Эсир сăн ӳкерчĕкре ĕçчен те пултаруллă Л.П. Полякова медсестрана куратăр. Малтанах вăл Каршлăхри ачасен санаторийĕнче, кайран Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницăн инфекци уйрăмĕнче, хыççăн терапи уйрăмĕнчи физкабинетра, халĕ вара поликлиникăн кăнтăрлахи стационарĕнче пĕтĕм пултарулăхне хурса тăрăшать. Миçе çул тетĕр-и? 43 çул. Çапла унăн медицинăри ĕç стажĕ. Ирхи 8 сехетре ĕç пуçланать пулсан, ăна 7 сехетрех кунта курма пулать. Чирлисене эмелсемĕр пуçне ăшă кăмăлĕпе, çепĕç сăмахсемпе те сиплет вăл. Çавăнпа та ку тăрăхра ырă ятлă Людмила Павловна Полякова.***

**О. СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ыр кăмăллăх марафонĕ

## Ырă ĕç тума васкăр

"Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" марафон вĕçленсе пырать. Районти нумай çын çак пархатарлă ĕçе хутшăнма кăмăл турĕ. Укçа куçарса паракансем те, япала килсе паракансем те сахал мар.

Ĕнерхи кун тĕлне ятарлă счет çине пĕтĕмпе 62 пин те 295 тенкĕ куçнă. Райхаçатра унччен асăннисемсĕр пуçне çаксем укçа куçарса панă: Çатракасси ял тăрăхĕ 1200 тенкĕ, Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕ 300 тенкĕ, Катькас ял тăрăхĕн администрацийĕ 750 тенкĕ, Хорнуй ял тăрăхĕ 1010 тенкĕ, Мăн Хураçка шкулĕ 750 тенкĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Александр Александрович Сидюшкин 500 тенкĕ, Турай ял тăрăхĕ 1180 тенкĕ, Йӳçкасси ял тăрăхĕ 1000 тенкĕ, Шетмĕпуç ял тăрăхĕ 585 тенкĕ, Оринин ял тăрăхĕ 900 тенкĕ, Ярославка ял тăрăхĕ 550 тенкĕ, Муркаш тĕп больницин поликлиники 620 тенкĕ, Тойкилтĕ шкулĕ 440 тенкĕ, "Тюльпан" ача сачĕ 200 тенкĕ, "Передовик" хуçалăх 1000 тенкĕ, Муркаш издательство çурчĕ 700 тенкĕ.

Унччен усă курнă япаласене килсе панисем те пур: Ю.М. Петрова предприниматель 1000 тенкĕлĕх, Юнкă шкулĕ, "Рябинушка" ача сачĕ, Ярославка ял тăрăхĕ.

Уйăха пынă ыр кăмăллăх марафонĕ вĕçленсе пырать. Эрне кун, мартăн 23-мĕшĕнче, районти Культура çуртĕнче 11 сехетре унăн итогĕсене пĕтĕмлететпĕр. Тăлăх ачасене пулăшма васкăр. Пур пулăшăва та хапăл тăватпăр.

**Н. ПЕТРОВА,**
**социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**

Райадминистрацире

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи мартăн 14-мĕшĕнчи 96 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе çаксене наградăланă:

Ял хуçалăхĕнче нумай çул вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçри активлăхшăн "Ударник" хуçалăх директорне **Платон Павлович ДАВЫДОВА**;

Ял хуçалăхĕнче нумай çул вăй хунăшăн "Ударник" хуçалăх инженерне **Илья Васильевич АЛЕКСЕЕВА**;

"Свобода" хуçалăх ĕçченне **Геннадий Константинович БЕЛОВА**;

Ильич яч. хис. хуçалăх водительне **Виталий Петрович ИЛЬИНА**;

Андреев яч. хис. хуçалăх механизаторне **Валерий Никодимович ОСИПОВА**;

Ильич яч. хис. хуçалăх тĕп зоотехникне **Дина Феоктистовна ТИМОФЕЕВАНА**.

Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра нумай çул ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçри активлăхшăн "Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани" МУП тĕп бухгалтерне **Федосия Валерияновна ГРИГОРЬЕВАНА**.

Йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн "Муркашрайбыт" общество çĕвĕçне **Эльвира Михайловна АНДРЕЕВАНА**.

Ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул ĕçленĕшĕн районти электроçыхăну узелĕн аслă электромеханикне **Вениамин Михайлович СМИРНОВА**.

Сĕнӳсем вырăнлă пулĕç

## Шведсенчен суту-илӳ тума вĕренетпĕр

***Мартăн 13-мĕшĕнче пирĕн района ĕçлĕ делегаци килсе çитрĕ. Вĕсен шутĕнче Швеци кооператорĕсем Стиг Оберг, Олле Стайнер тата вĕсен куçаруçи Наталья Степановна Прутцкова, Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕн çумĕ Н.И. Наумова тата ыттисем те пулчĕç. Делегаци ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаштарма эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕнчен А.Н. ИВАНОВРАН ыйтрăм.***




– Коопераци ĕçченĕсем пирĕн районти Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен вунă объектĕнче пулса курчĕç. Вĕсем суту-илӳ йĕркелĕвĕ çине пысăк тимлĕх уйăрчĕç. Тавар туянакансемшĕн пур енлĕн те меллĕ пулмалла. Апла пулсан сутуçăн çавна кирлĕ пек йĕркелесе пама пĕлмелле. Çавăнпа та самообслуживани йĕркипе ытларах ĕçлеме сĕнчĕç Швеци кооператорĕсем. Çак йĕрке вара таварçаврăнăшне татах та пысăклатма май парĕ. Тавара сентресем çине тĕрĕс вырнаçтармалла, ассортиментне çĕнетсех, пуянлатсах тăмаллине асăнчĕç. Калăпăр, апат-çимĕç сутнă çĕрте шăл тасатмалли паста пулсан питĕ лайăх пулмалла. Рекламăпа ытларах ĕçлемелле. Тавар сутмалли лаптăкпа тухăçлă усă курмалла. Пушă вырăна ытти тавара хума пулать. Çакăн пек енсем çине ытларах тимлĕх уйăрчĕç вĕсем. Хăнасем Чăваш Ене опытпа паллашма мар, вĕренӳ, сĕнӳ пама килнĕ. Пĕтĕмĕшле калас пулсан, пирĕн районти райпосен ĕçĕ-хĕлĕ кăмăла кайрĕ вĕсене. Тавар ассортименчĕ пуян пулни, таварçаврăнăшĕ лайăх аталанни инçетри хăнасемшĕн кăмăллă пулчĕ.

Пирĕн района киличчен Стиг Оберг, Олле Стайнер Чăвашпотребсоюз системинчи маркетинг службин вĕренĕвне йĕркеленĕ. Шупашкарти кооператив техникумĕнче вĕрентӳ ирттернĕ май Швеци кооперативĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă.

Тĕнче шайĕнчи çавăн пек ĕçлĕ делегаци килни питĕ вырăнлă тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен паянхи пурнăçра пĕр вырăнта тăнипе çитĕнӳ пулаймĕ. Лайăх аталаннă ĕç-хĕлпе паллашни, вĕсен опычĕпе усă курни малалла туртăнма май парĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Швеци кооператорĕсен сĕнĕвĕсем пирĕншĕн усăллă пуласса шанас килет.**

Икĕ уйăх итогĕсем

## Пĕлтĕрхинчен лайăхрах ĕçленĕ

Январь тата февраль уйăхĕсенче районти ял хуçалăх тата промышленноç предприятийĕсем продукци 508160,7 пин тенкĕлĕх реализациленĕ. Иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен115,4 процент нумайрах.

Çав шутра ял хуçалăх продукцийĕ 424294,0 пин тенкĕлĕх (106,8 процент), промышленноç продукцийĕ 83866,7 пин тенкĕлĕх (195,5 процент).

Уйрăмах ăнăçлă ĕçленĕ промышленноç предприятийĕсене палăртар. Муркашри кирпĕч завочĕ продукци кăларассине 381,4 процент ӳстернĕ: 2863 пин тенкĕлĕх кирпĕч ăсатнă. "Сеспель" общество пысăк хăватсемпе ĕçленине уйрăммăн палăртар: 49000,0 пин тенкĕлĕх продукци ăсатнă. Кăтартăва 275,4 процент чухлĕ ӳстернĕ. Лайăххисен шутĕнче: "Моргаушрайгаз" филиал - 256,7 процент, "Моргаушрайбыт" общество – 179,6 процент, "Моргаушское" МСО – 139,8 процент, "Моргауши-Хлеб" – 135,5 процент, "Милград"- 125 процент, Муркаш издательство çурчĕ – 117,2 процент, "Сундырь-Хлеб" – 113,2 процент.

Икĕ уйăхра аш-какай чĕрĕ виçепе 1178,5 тонна туса илнĕ, иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 108 процент нумайрах. Сĕт 6159,1 тонна (101,4 процент) сунă. Кашни ĕнерен вăтамран 535 килограмм сĕт суса илнĕ. Пĕтĕмпе 9397,6 пин (111,2 процент) çăмарта илнĕ.

Çапла вара 100 гектар çĕр пуçне 18,7 центнер аш-какай, 97,7 центнер сĕт туса илнĕ. Çак кăтартусем те пĕлтĕрхинчен ӳснĕ.

Мăйракаллă шултра выльăх йышĕ чакнă, пĕлтĕрхин 96,9 процентĕпе танлашнă. Пĕтĕмпе районта 20382 пуç мăйракаллă шултра выльăх. Сыснасен йышĕ ӳснĕ, 101,4 процент. Халĕ районта 20810 пуç сысна. Сурăхсен тата лашасен йышĕ чакнă.

Халăхран пĕтĕмпе 284,9 тонна сĕт туяннă, пĕлтĕрхин 134 процентĕ. Аш-какай вара 116,3 тонна туяннă, 149,1 процент чухлĕ.

Район çыннисене икĕ уйăхра 59898,4 пин тенкĕлĕх вакăн тавар сутнă. Пĕлтĕрхинчен 130,4 процент нумайрах.

**Район администрацийĕн экономика пайĕ.**